Çын тата саккун

# Юнпа пĕвеннĕ хĕллехи каç

Эрех пĕлтерĕшĕ, сиенĕ пирки çырма та кирлĕ мар пулĕ. Ку наркăмăш çинчен аслă ăрури кăна мар, ача садне çӳрекенни те аванах пĕлет. Анчах та унпа çывăхланни ырăпах вĕçленмест çав. Пĕр-пĕрне савакансем черккене пула телейпе хуйха çурмалла пайлама пăрахсан çемье тенин ячĕ кăна юлать. Кил ăшшипе тĕпелĕ ирхи тĕтре пекех сĕвĕрĕлет. Пĕри теприншĕн тĕрек пулма пăрахсан вара, хăрăк йывăç пекех, çемьери хутшăнусем те хуçăлаççĕ. Вĕсем хушшинче çил-тăвăл тухать. Пĕри теприне, шел пулин те, самантрах пурнăçпа сыв пуллаштарма та именмест. Çавăн пеккисен малашнехи шăпине пăхса тухаççĕ те шалти ĕçсен пайĕнче, прокуратурăра, судра. Айăпли вара суд залĕнчех тăван-пĕлĕшĕсемпе чылайлăхах сыв пуллашать, алăсене йывăр сăнчăр пăркăчлать. Халĕ ĕнтĕ кунта тăварлă ӳкĕнӳ куççулĕ те пулăшаймасть.

Вăхăт ытла нумаях та иртмерĕ-ха 41 çулхи Валерий Иванович Кирилловăн шăпине татса панăранпа. Унăн ячĕпе вара ятлаçу, ӳпкелешӳ çăмахĕсем чылай янăрарĕç. Ăна валли сăлтавĕ ытла та пулчĕ-çке. 2007 çулхи февралĕн 14-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи пĕр ялта арçын арăмне чĕререн çĕçĕпе пĕр хутчен чиксе вĕлерет. Çын вĕлерекен хăйĕн айăпне йышăнать.

Айăплав ĕçне район прокуратурин аслă следователĕ Михаил Николаевич Тарасов ертсе пырать.

Çак тискер ĕçе пурнăçличчен вăл темиçе те судпа айăпланнă. Арçын йĕплĕ карта леш енче пулнă çулĕсене тишкерсессĕн вара пĕр-пĕр ĕç кĕнекийĕ пулĕ тейĕн, çул хыççăн çул тăсăлать. 1983 çулта ăна Шупашкарти Калинин район сучĕ çичĕ çуллăха ирĕкрен хăтарнă. 1990 çулта тухнă та çав çулах ашшĕне хĕненĕшĕн тăватă çул та ултă уйăх хушши алăсене тимĕр сăнчăр пăркăчланă. 1995 çулта, тен, чăн та кĕтнĕ ирĕклĕх çитнĕ. Анчах ирĕклĕ пурнăç нумайлăха марçке уншăн, хальхинче каллех пилĕк уйăх хушши кирпĕч шутлама тивнĕ. Нивушлĕ унти пурнăç çав тери паха? 1996 çулта вара йĕплĕ пралук 6 уйăхлăха черетлĕ “хăнана” йыхравлать. 1998 çулта пĕр çулталăк хушши ĕç укçин çирĕм процентне тытса юлмалла тăваççĕ. Çав çулах тăватă çулталăклăх ирĕклĕхпе сыв пуллашать. Чăн та, пĕр хăнăхнă пурнăç хăй ытамнеллех астарать пулас. 2001 çулта каллех пилĕк çуллăх тăван-пĕлĕшрен “черетлĕ канăва” уйрăлать. Ку хутĕнче 2003 çулта вăхăт çитмесĕрех ирĕке кăлараççĕ. Айăпланă статьясем вара ытларах та ытларах. Анчах, ытла та шел, çавăн чухлĕ çул кирпĕч шутлани ăна усăллă пулайман. Арăмĕ шăрçаланă çыруçи юрату йĕркисем те пĕр хытнă чун-чĕрене çемçетеймен, ĕмĕрлĕхех ирĕклĕхре юлма хистеймен.

2001 çулхи Çĕнĕ çула кĕтсе илес умĕн вăл пулас арăмĕпе паллашнă. Çур çула яхăн пĕрне-пĕри килĕштерсе пурăннă хыççăн çуллахи пĕр савăк кун вĕсем пĕр çемье çавăраççĕ. Анчах та вĕсен хушшинче йĕплĕ пралук туртăнать. Халĕ вара çыру йĕркисем кăна вĕсене пĕрлештернĕ. Вăхăт малаллах шăвать. Юлашкинчен арçын тĕрмерен тухать, хăйĕн Шупашкарти хваттерне сутать, Муркаш районĕнче çурт туянать.

Кирилловсем иккĕшĕ те сутуилӳ ĕçĕпе пурăннă, предпринимательсем пулнă. Упăшки ытларах ĕçлесе илнĕ, анчах та укçана хăйĕн кĕсйинчен ытлах кăларма тăрăшман. Арăмĕ вара хăй ĕçлесе илнĕ укçа çине ытларах шаннă. Иккĕшĕ те эрехе тăшман вырăннех хуман, вăхăт-вăхăт ун серепине леккеленĕ.

Çапах та арçын ытларах кăмăлланă эрехе. “Эпĕ эрнере 2-3 хутчен эрех ĕçетĕп, пĕрре ĕçнĕ чухне ним те мар пĕр литр эрехе парăнтарма пултаратăп”, – палăртнă вăл хăй кăтартăвĕнче.

...Пĕр кунхине Шупашкар хулинчен Кириллов тата унăн 5-6 çул хушши палланă юлташĕсем таксипе яла çитеççĕ. Пĕр юлташĕ арçын, тепри хĕрарăм. Хĕрарăм вара паян кунхи усламлă ĕçпе аппаланать. Хĕрачасене суйласа илсе хулана хваттере ăсатать. Шупашкар хулин Мир, Ленин проспекчĕсенче тата Хусанкай урамĕнче притонсем тытса тăрать.

Тĕл пулнă юлташсем эрехпе сăйланнă, юрă-кĕвĕ янăратнă, пӳртре савăнăç хуçаланнă. Ирхине вара савăнăçа пайлама юнашар ялти тепĕр арçын-юлташ çитнĕ. Черкке хыççăн черкке ӳпĕннĕ, сăмах çăмхи сӳтĕлнĕçем сӳтĕлнĕ. Çав кунсенче 14 пин тенкĕ укçа çухалнине тата ăна арăмĕ кăна илме пултарнине асăннă Кириллов.

Каç еннелле савăнăç хуçаланнă пӳрте 30-35 çулсенчи хĕрарăм кĕнĕ. Вăл В.И. Кирилловăн арăмĕ Шупашкар хулинчен çитнĕскер пулнă. Ку вăхăталла эрех серепинче савăннă тус-юлташ вырăн çинелле ӳпĕнме ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Çамрăк хĕрарăм та хĕл кунĕнче шăнас мар тесе ăшне хаяр шĕвек тумлатма ĕлкĕрнĕ пулас. Вăл çул çинчен килнĕ çиелти тумĕпех (хура курткăпа) упăшки çумне выртнă. Анчах тепĕр сехетсенчен кăра çилĕллĕ арçын пуçĕнче çисĕм евĕр шухăш мĕлтлетет. Арăмĕ унăн ирĕкĕсĕрех вунтăватă пин тенкĕ укçана илсе тухса кайнăçке! Çак аса илӳ пĕр самантрах арçынна çӳл тӳпери вĕçеврен çĕр çине антарса тăратать. Çитменнине тата хĕрарăм юлашки вăхăтра эрехе ытларах кăмăлланă, килтен те çухалкаланă. Хальхинче те вăл пилĕк кун хушши килте пулман. Картран тухма ĕлкĕрнĕ арçын хĕрарăмран укçа ыйтнă, чышкипе çапнă. Хăранăран вăл пӳртри арçынсем патнелле ыткăннă, пулăшу ыйтнă. Хăй вара çавçавах упăшкин 14 пин укçине курманнине çирĕплетнĕ. Пӳртре киревсĕр сăмахсем янăранă. Ку енĕпе вара арăмĕ те, упăшки те парăнман. Чикĕрен тухнă арçыннăн аллисем пĕр самантрах журнал сĕтелĕ çинчи вунсакăр сантиметр тăршшĕ çĕçĕ патнелле туртăннă. Унăн пĕртен-пĕр сулăмĕ хĕрарăма ураран ӳкернĕ. Кĕтмен лару-тăру пурне те ура çине тăратнă. Куççульпе йĕпеннĕ Кириллов вара хĕрарăма искусствăлла майпа сывлаттарма тăрăшнă, анчах кăлăхах.

Ĕçкĕççем кӳршисем патĕнче милици ĕçченĕсене кĕтнĕ. Вĕсем çитсен вара çын вĕлерекен йĕрке хуралçисем патне тухать. Каллех йĕплĕ пралук леш енне лекесрен хăранипеши, хăйне хӳтĕлет, айăпа хăйĕнчен сирме хăтланать. Вăл пĕр юлташне çĕçĕне пытарма хушнă. Лешĕ вара çапла тунă та. Малтанлăха прокуратура, милици ĕçченĕсене суйма хăтланнă, анчах та суя сăмах яланах çиеле тухать. Тепĕр кунне кăна явапла органсем тĕпчесен-тĕпчесен вăл ерипен сăмах çăмхине сӳтме пуçлать. Анчах та иртнĕ савăк кунсене те, çумри çывăх çынна та таварма çук ĕнтĕ.

Аса илер-ха, февралĕн 14-мĕшĕ мĕнпе паллă кун? Юратакансен кунĕ! Апла пулсан çемье ăшшине, тĕпелне упракансене тивĕçлипех хаклама пĕлекен арçынсем çак кун чечек çыххи парнелемеççĕ-ши? Шел пулин те, ку çемьере юрату кунĕнче хĕрлĕ чечек хĕмленеймерĕ.

Çакна та палăртса хăварар. Упăшки малтан та эрехпе иртĕхнĕ, арăмне хĕненĕ тĕслĕхсем пулнă. Хĕрарăм пĕрре мар пускилте çывăрнă. Апла пулсан мĕншĕн-ха ял тăрăхĕнчи тата ытти явапла ĕсченсем вăхăтра тивĕçлĕ мерăсем йышăнман, учета илмен? Е çемьери харкашушăн, çапăçушăн вĕсем пачах та явапла мар? Вăхăтра профилактика ĕçĕсене туса ирттернĕ пулсан, çакăн пек хăрушла ӳкерчĕк пулса та тухмĕччĕ-и тен? Кун пирки район прокурорĕ Сергей Александрович Фирсов яваплисене асăрхаттарнă.

Çапла вара суд залĕнче Валерий Иванович Кириллов пирки приговор янăрарĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 105 статйин пĕрремĕш пайĕпе айăплă тесе йышăнчĕç, вунпĕр çуллăха ирĕкрен хăтарчĕç. Халĕ ĕнтĕ ку унăн çиччĕмĕш айăплав пулчĕ. Çак вăхăта çирĕп йĕркеллĕ юсану колонийĕнче ирттермелле турĕç. Кун-çулĕ вăхăтсăр татăлнă хĕрарăмăн аппăшне çĕр пин тенкĕ тӳлемеллине палăртрĕç. Çапларах çаврăнса тухрĕ эрехпе, юлташсемпе тулнă пӳртри ĕç-пуç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Материалти айăпланаканăн тата ял ячĕсене улăштарнă.

## В Моргаушах – первый банкомат




28 сентября 2007 года в селе Моргауши был подключен первый уличный банкомат, установленный в Моргаушском отделении Сбербанка России с круглосуточным режимом работы и в выходные дни.

В настоящее время Моргаушским ОСБ эмитировано в порядке 2000 банковских карт, в т.ч.:

- Maestro социальная - 1069,
- Maestro личная - 1,
- VISA Electron - 64,
- VISA Classic - 13,
- Сберкарт - 750 шт.

Многие предприятия и учреждения успели подписать зарплатные договора на перечисление зарплаты на счета по банковским картам. Первое время обслуживание эмитированных пластиковых карт проводились через терминальные устройства в отделении Сбербанка в селе Моргауши, в филиалах в селе Юськасы и Тораево, в деревне Одаркино и в дополнительном офисе в селе Большой Сундырь. При условии увеличения числа эмитированных банковских карт до 5 тысяч штук и более дополнительно будет выделен банкомат и установлен в селе Большой Сундырь, при доведении до 10 тысяч штук третий банкомат возможно установить в здании райадминистрации.

С запуском банкомата в отделении Сбербанка ускорится обслуживание клиентов по получению наличных денег по банковским картам.

Сбербанк Росси предлагает разные виды международных банковских карт, также и Сберкарт. С банковской картой можно оплатить товары и услуги в торгово-сервисной сети без комиссий и получать дополнительные скидки, хранить и преумножить средства: на сумму средств на карте начисляются проценты, а развитая инфраструктура обслуживания карт предоставляет возможность получить наличные в любое удобное время; безопасно перевозить средства и получать наличные на территории Российской Федерации; оплачивать коммунальные услуги, погашать кредиты и осуществлять регулярные выплаты в банкоматах и терминалах самообслуживания.

Международные карты ориентированы на запросы любых клиентов:

Maestro социальная - для тех, кто получает различные социальные выплаты (пенсии, пособии, дотации);

VISA Classic - наиболее популярная карта, сочетающая набор предоставляемых услуг и стоимость обслуживания;

VISA Electron и Maestro – недорогие карты, удобные при расчетах в путешествиях и поездках;

VISA Gold - дорогая и престижная карта, обеспечивающая владельцам привилегированный уровень сервиса.

Комплекс услуг “Мобильный банк” позволит контролировать за состоянием счета вашей банковской карты с помощью запросов в виде SMS-сообщений как в сети своего оператора сотовой связи, так и в любой точке мира.

**Управляющий Моргаушским ОСБ №7034 Х.М. ТИМОФЕЕВА.**

Редакци почтинчен

## Тав тăватпăр

Юратнă мăшăра, аттене, кукаçие – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăннă Александр Евгеньевич Крылова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, çак пысăк хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн пирĕн тăвансене, хурăнташсене, ял-йыша, кӳршĕсене чĕререн тав тăватпăр.

**Мăшăрĕ, ачисем, мăнукĕсем.**

Налука вăхăтра тӳлесчĕ

## Приставсем киле пырасса ан кĕтĕр

Вăл е ку пурлăхпа усă куратпăр-ха, анчах тĕрлĕ сăлтавсене пула налук вăхăтра тӳлесси ытла та кая юлса пырать. Çакă вара ытларах чухне укçа-тенкĕ саплашăнайманнипе е пурлăха сутнă, анчах тивĕçлĕ документсене йĕркелесе çитерейменнипе çыхăннă. Налук калăпăшĕ вара çумăр хыççăнхи кăмпа евĕрех ӳсет. Ку енĕпе тивĕçлисем пурпĕрех парăмçăсене куçран вĕçертмеççĕ.

Сентябрĕн 20-мĕшĕнче налук тӳлевĕсене вăхăтра тӳлеймен уйрăм çынсем патне Ярославка ял тăрăхне ятарлă рейд çула тухрĕ. Унăн шутĕнче çаксем пулчĕç: Раççей Федераллă налук службин Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн анализ, отчет тăвассин тата парăмсене йĕркелес пайĕн пĕрремĕш разрядри специалисчĕ Л.А. Семенова, А.М. Бочкарев, П.А. Матвеев, С.В. Парандеев суд приставĕн исполнителĕсем.

Ярлославка ял тăрăхне кĕрекен ялсенчи парăмçăсен йышĕ пĕчĕк мар, анчах вĕсенчен чылайăшĕ вăл тăрăхра пурăнмаççĕ. Çавăнпа та ун йышши парăмçăсемпе курнăçса калаçма тӳр килмерĕ. Çапах та çул çӳрев ăнăççăрах иртмерĕ.

Транспортпа усă курнăшăн тӳлемелли налук пĕчĕккисен шутĕнче мар. Енчен те МАЗ, ЛИАЗ, КамАЗ йышши автомашина пулсан, налук самай пысăк пулать. Çакăн пек тĕслĕхсем рейд вăхăтĕнче те тĕл пулчĕç. Пĕр парăмçă автомашинăсем тĕлĕшпе вăхăтра тивĕçлĕ документсем туса çитерейменнипе. Çавна май налук калăпăшĕ вăтăр пине çитме ĕлкĕрнĕ. Налука вара вăхăтра тӳлеймесен пурлăха арестлеме, унпа сыв пуллашма тивет. Кунта каллех тивĕçлĕ документсем, укçа-тенкĕ кирлĕ. Парăма пурлăха арестлесе шыраса илнĕ чухне парăмçăн парăм виçи вăхăт иртсе кайнă кашни куншăн пени, патшалăх пошлини тӳлеме тивет. Çӳлерех асăннă тĕслĕхре вара пĕтĕмĕшле парăм виçи вăтăр виçĕ пин урлă каçма ĕлкĕрчĕ. Анчах та яваплăха туякан парăмçă пĕтĕм парăма рейд вăхăтĕнчех тӳлесе татрĕ.

Тепĕр парăмçăн та автомашинăпа тата хваттерпе усă курнăшăн тӳлемелли налуксен виçи пĕчĕк мар. Вăл тата свидетельсем калаллă тăрăх автомашинăна темиçе çул каяллах сутса янă ĕнтĕ. Анчах та документсене вăхăтра тата тĕрĕс туса çитереймен пирки парăм унăн ячĕпех пухăнса пырать. Пурлăха арестлеме вара автомашина çук.

Çавăн пекех çын хваттерте пурăнать е çук пулсан та налука пурпĕр тӳлемелле. Парăмçăна шыраса нумай хваттерлĕ çурта çитрĕмĕр. Унти тирпейсĕрлĕх вара подъезда кĕнĕ çĕртенех пуçланчĕ, мĕнле кăна çӳп-çап çук кунта. Çакă çӳлерех хăпарнăçемĕн те палăрчĕ. Шел, парăмçă хваттерте пулмарĕ. Çавăнпа та ăна ашшĕамăш кил-çуртне шыраса кайма тиврĕ. Хваттершĕн тӳлемелли налукшăн пурлăха арестлессине палăртсан: “Манăн арестлемелли нимĕнле пурлăх та çук”, – терĕ.

Вăрăм çул пире “Сеятель” хуçалăх правленине илсе çитерчĕ. Ăна валли вара сăлтавĕ те пулчĕ. Суд приставĕсен службинчен çӳлерех асăннă иккĕмĕш парăмçă хуçалăхра ĕçлесе пухнă ĕç укçи пирки ыйтса çыру янă. Хурав-çыру çине унăн илмелли ĕç укçи çуккине палăртнă. Парăмçă сăмахĕ тăрăх вара хуçалăхран унăн сакăр пин тенкĕ укçа илмелле. Çак ыйтăва уçăмлатма çитрĕмĕр та ĕнтĕ эпир хуçалăх правленине. Телее, хуçалăх ертӳçипе тĕп бухгалтер та вырăнтахчĕ. Вĕсен вара кашни ыйту çинех хуравĕ малтанах хатĕр тейĕн. Ыйтăва уçăмлатма ытти ыйтусене тата хăш-пĕр документа çĕклеме тиврĕ. Юлашкинчен вара ертӳçĕ пулăшма шантарчĕ. Парăмçăн хăш-пĕр услугисемшĕн тытăннă хыççăнхи укçана транспорт налукĕ шутне куçарассине палăртрĕ.



Сăмах май палăртар. Рейда хутшăнакан Людмила Александровна Семенова палăртнă тăрăх “Сеятель” хуçалăх хăй те налук тӳлес енĕпе пысăк парăмçăсен шутĕнче тăрать. Темиçе уйăх ĕнтĕ çак ĕçе пурнăçлаймасть.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: рейда хутшăнакансем тĕрĕслев ирттереççĕ.**

Пĕлтерӳсем. Объявления

**Закупаю свинину. Тел.: 8-927-854-96-32, 2-13-77. 6-8.**

**Ултă уйăхри хĕрлĕ тĕслĕ тына сутатпăр. Тел.: 8-905-346-59-94.**

**Работа в избирательной компании. Тел.: 8-927-863-67-80, 8-902-359-01-71.**

**Продаю шкафы двух- и трехдверные, диван, 2 кресла б/у, в хорошем состоянии. Тел.: 8-927-858-30-20.**

**ОАО «МОРГАУШАГРОПРОМХИМИЯ» ТРЕБУЮТСЯ НА РАБОТУ:**

**- автослесари для ремонта грузовых автомобилей (4 чел.) с опытом работы, в возрасте до 40 лет, оплата до 20000 рублей;**

**- газоэлектросварщик IV-V разряда, оплата до 20000 рублей;**

**- водители на автомобили КамАЗ, СуперМАЗ, оплата от 12000 рублей.**

**Контактный телефон: 8(8352)54-65-00; 8(241)60-2-41.**

Районти пушар хуралĕн коллективĕ çак тытăмра нумай çул водитель пулса ĕçленĕ, ĕçре ырă ята тивĕçнĕ **Валериан Виссарионович КОРНЕЕВ** вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтерет.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ **Валериан Виссарионович КОРНЕЕВ** вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĚНТЕРӲ ЯЛАВĚ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
**Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3480.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 02.10.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан (вкладыши - в ГУП “Моргаушский издательский дом”) в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.